# ЭП КАЙМĂТТĂМ ВĂРМАННЕ






Эп каймăттăм вăрманне те
хăмла çырли пулмасан;
утса пырассăм килет те,
чупса çитессĕм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет.

Эп килмĕттĕм çакăнта
эсир кунта пулмасан,
чупса пырассăм килет те,
чупса çитессĕм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет.

Покранимĕр кăвак лаши,
майĕнчен сӳсмен каймарĕ;
чупса пырассăм килет те,
чупса çитессĕм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет.

Покранимĕр пир[ĕ]н тăвансем
пирĕн умран каймарĕç;
чупса пырассăм килет те,
чупса çитессĕм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет,
кăнтăрлахи сарă хĕвел пек
сирĕнпеле пĕрле пулассăм килет.